А. А. Алексеев

## И. Я. Яковлев тата ăна çырулăх тума пулăшакансем

Чĕлхе - нацин тĕп паллисенчен пĕри, унăн ăс-тăн пуянлăхĕ. Вăл çынсене пĕр-пĕринпе хутшăнма, ăнланма пулăшакан хатĕр.

Кашни халăх çырулăхĕн никĕсĕнче çав чĕлхен хăй-евĕрлĕхне палăртса тăракан графикпла о рфографи йĕрки пулмалла. Кунсăр пуçне наукăра çыру палăкĕсен пĕтĕм йышне те çырулăх теççĕ.[1]

Аслă Октябрь революцийĕ хыççăн Совет Союзĕнчи 50 халăх ытла хăйĕн çырулăхне тунă, иле млĕ литература, хаçат-журнал, шкул учебникĕсем кăларма тытăннă. Тăван чĕлхепе хайласа çырнă кирек мĕнле литература произведенийĕ те наци культурин çырулăх палăкĕ шутланать.[2]

Чăваш çырулăхĕ революцичченхи тапхăртах пысăк çитĕнӳсем тунă. Уншăн эпир тăван чĕлхе мĕрĕн шалти асамлă вăйне хăват кĕртме пултарнă çынсене тав тума тивĕç, мĕншĕн тесен вĕсен ç ырулăхри сăпайлă ĕçĕ-хĕлĕ пусмăр саманинчех халăхăмăрăн чун-хавалне çĕклентерме, ăна хăйĕн тивĕçне ăнланса илме, тăван халăх культурине вăйлă аталаннă çырулăхлă халăхсен культури шай не çити çĕклеме, чăвашсен наци ăнланулăхне вăратма пулăшрĕ.

Пирĕн çырулăх хăйĕн çулĕсемпе çамрăках мар: чăваш сăмахĕсене хут çине çырса пичетленĕ ренпе 240 çул ытла иртрĕ ĕнтĕ. Хăшпĕр тĕпчевçĕсем çырнă тăрăх, чăвашсен пиллĕкмĕш ĕмĕртех ç ырулăх пулнă.[3] Ахальтен мар пуль ĕнтĕ вĕсен тĕррисенчи ӳкерчĕксем авалхи çырулăх паллисене а са илтереççĕ.

Историксем чăваш сăмахĕсене чи малтан швед çарĕн капитанĕ Ф. Страленберг çырса илнĕ теççĕ. Хăй вăл, 1709 çулта Полтава патĕнчи пĕр çапăçура Пĕрремĕш Петĕр çарне тыткăна лекнĕскер, 18 çул хушши Çĕпĕрте пурăннă, унти халăхсен культурипе йăла-йĕркине сăнанă, чĕлхине тĕпченĕ. Каялла хăй тăван çĕршывне таврăннă чух (1827) Страленберг Хусанта чарăнса тăнă, чăвашла чухлакан кунти тăлмачсенчен 28 сăмах çырса илнĕ. 1769 çулта Наукăсен Петербургри академийĕ чăваш чĕлхин малтанхи грамматикине «Сочинения, принадлежащие к грамматике чувашского языка» ятпа пичетлесе кăларнă.

Чăвашсене Христос тĕнне йышăнтарни те вĕсен культурипе çырулăхне аталанма пулăшнă, чăвашла кĕнекесем кăларас ĕçе хăвăртлатнă. Кивĕ çырулăх тапхăрĕнче (1730 - 1870) тĕн содержанилле çирĕме яхăн чăвашла кĕнеке пичетлесе кăларнă. Анчах вĕсем пурте тенĕ пекех ниме юрăхсăр куçарусем пулнă-ха.

Аякран, ĕмĕрсен сĕм чăтлăхĕ витĕр, вăрах çуталса килнĕ чăн-чăн чăваш çырулăхĕн илемлĕ шурăмпуçĕ. Ку вăл тăван çырулăхăмăрăн Аслă Октябрь революцийĕчченхи (кивĕ çырулăх хыççăнхи) иккĕмĕш тапхăрĕ - И. Я. Яковлев пуçарса янă çĕнĕ çырулăх ĕмĕрĕ.

Чăваш çырулăхĕн çĕнĕ тапхăрне И. Я. Яковлев пек хастар чун-хавалла, халăхăмăрăн малаш ĕмĕтне, шухăш-кăмăлне, хуйхи-суйхине чĕрере тытса тăракан пысăк чĕреллĕ çын çеç пуçарса яма пултарнă. Унăн чăваш çырулăхĕпе культурине аталантарас тĕлĕшпе 50 çул хушши (1868 - 1918) тунă пархатарлă ĕçĕ - чăн-чăн паттăрлăх.

XIX ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринче патша правительстви Российăри капитализма хăвăртрах аталанма май паракан хăшпĕр реформăсем туса иртнернĕ: 1861 çулхи февральте крепостной правăна прахăçланă, ун хыççăнах земствăна, суда, цензурăна, çутĕçне çĕнĕлле йĕркелеме май паракан реформăсене çирĕплетнĕ. 1864 çулта кĕпĕрнесемпе уессенчи земство учрежденийĕсем çинчен калакан положение çирĕплетнĕ. Çак положени кĕпĕрнесемпе уессенчи земствăсене хуçалăхпа халăха вĕрентес ĕçе вырăнти условисене кура йĕркелеме тата ертсе пыма ирĕк панă. 1864 çултах патша правительстви пуçламăш халăх училищисем çинчен калакан положение çирĕплетнĕ. Çак положени хăшпĕр учрежденисемпе уйрăм çынсене шкулсем уçма та ирĕк панă.

1866 çулта çутĕç министрĕпе Д. А. Толстой графпа Хусанти тĕне кĕнĕ тутар ачисен шкулĕнче ĕçленĕ Н. И. Ильминский Хусан вĕренӳ округĕнче халăха вĕрентес ĕçе тĕрĕсленĕ, çавна май Атăл тăрăхĕнчи вырăс мар халăхсен шкулĕсемпе паллашнă. Чăвашсем, марисем, удмуртсем йышлăн тутара тухни Хусан вĕренӳ округĕнчи вырăс мар халăхсене вĕрентес ĕçе çĕнĕлле йĕркелеме хистенĕ. Тĕрĕслев итогĕсене, педагогикăла методика ыйтăвĕсене Хусанта, Петербургра пухнă канашлусенче çине-çинех сӳтсе явнă. Уйрăмах шкулсенче тăван чĕлхепе вĕрентме юрани-юраманни пирки хĕрӳ тавлашусем пуçланнă. Ку ыйту пирки Çутĕç министерстви те татăклă сăмах калайман. 1866 çулта çак тавлашăва татса парас тĕллевпе Хусан вĕренӳ округĕнче ятарласа комисси йĕркеленĕ. Комиссие Хусан вĕренӳ округĕн попечительне П. Д. Шестакова, Хусанти тĕне кĕнĕ тутарсен шкулĕн заведующине Н. И. Ильминские, Хусан вĕренӳ округĕнчи чăваш шкулĕсен инспекторне Н. И. Золотницкие тата Хусанти духовнăй академи профессорне Е. А. Малова кĕртнĕ. Комисси ертсе пынипе 1866 - 1870 çулсенче Хусан вĕренӳ округĕнчи чăваш, мари, удмурт, Çĕпĕрти тата Вăтам Азири халăхсен шкулĕсенче тăван чĕлхепе хăçан мĕнле тата мĕн чухлĕ усă курмалли ыйтăва тĕплĕн сӳтсе явнă.

Тăватă çула яхăн пынă дискусси материалĕсене 1869 çулта С.-Петербургра «Сборник докуме нтов и статей по вапросу об образовании инородцев» ятпа пичетлесе кăларнă. Материалсене тĕпл ĕн тишкернĕ хыççăн комисси, пĕр саслă пулса, Н. И. Ильмииский тĕне кĕнĕ тутарсен шкулĕнче тĕр ĕслесе пăхнă педагогикăпа методика системине ырласа йышăнать. Атăл тăрăхĕнчи халăхсен шкул ĕсенче тăван чĕлхене вĕрентме ирĕк памалли çинчен калакан положени проектне çырса хатĕрлет. Çав проекта 1870 çулхи мартăн 26-мĕшĕнче правительство çирĕплетнĕ. Положени чăваш, мари, уд мурт, çавăн пекех Çĕпĕрти, Вăтам Азири халăхсен шкулĕсенче тăван чĕлхепе вĕрентме ирĕк панă. Унăн содержанийĕ çапла: «По отношению к системе образования инородцы должны быть прежде всего разделены на две большие группы: а) инородцы-христиане и б) татары-магометане... Общим для всех инородцев-христиан в системе образования их должно быть следующее: а) орудием перв оначального обучения для каждого племени должно быть родное наречие его; б) учителем инород ческих школ должны быть из среды соответствующего племени инородцев и притом хорошо знаю щие русский язык, или же русские, владеющие, соответствующим инородческим наречием и в) дол

жно быть обращено внимание на образование женщин, так как племенное наречие и племенные особенности инородцев преимущественно сохраняются и поддерживаются матерями...».[4]

Атӑл тӑрӑхӗнчи вырӑс мар халӑхсене ҫутта кӑларас тӗлӗшпе уйрӑмах Н. И. Ильминский (1822 - 1891) нумай тӑрӑшса ӗҫленӗ. Вӑл 1863 ҫултах Хусанта тӗне кӗнӗ тутар ачисем валли шкул уҫнӑ, унта хӑйӗн педагогикӑпа методика принципӗсене тӗрӗслесе ҫирӗплетнӗ.

Ҫамрӑк И. Я. Яковлев 1864 ҫултах, Атӑл тӑрӑхӗнчи кӗпӗрнесенче ҫӗр виҫсе ҫӳренӗ вӑхӑтра, ҫырулӑх тӑвасси ҫинчен ӗмӗтленнӗ. Унӑн асаилӗвӗнче ҫапла ҫырса хӑварнӑ йӗркесем пур: «1864 ҫулта эпӗ Сызрань уесӗнче Винновка ялӗнче ӗҫлеттӗм. Мана пӗр шухӑш канӑҫ памастчӗ: тӑван халӑхӑн ҫырулӑх ҫукки пӑшӑрхантаратчӗ. Мӗншӗн ытти халӑхсен - вырӑссен, тутарсен хӑйсен ҫырулӑхӗ пур, мӗншӗн чӑвашсен ҫук, теттӗм. Винновка ялӗнче эпӗ хытӑ чирлесе ӳкрӗм, вилес патнех ҫитнӗччӗ ӗнтӗ. Сасартӑк Винновка ялне пар лашапа Долгорукова княгиня именийӗн управляющийӗ О. Косинский поляк пырса кӗчӗ. Ҫӗр виҫекен кирлӗ пулнӑран вӑл тӳрех ман пата пычӗ. Эп чирлшне курсан, вӑл мана хӑйпе пӗрле имение илсе кайрӗ. Килте Косинскийсем полякла калаҫатчӗҫ, вулатчӗҫ. Кунта эпӗ поляксен те хӑйсен ҫырулӑхӗ пурри ҫинчен пуҫласа илтрӗм. Мана, хам чӑваш пулнӑ май, хамӑр тӑван чӗлхепе ҫырнӑ кӗнекесем ҫукки хытӑ пӑшӑрхантарчӗ».[5]

Ҫак ӗҫре ӑна 1869 ҫулта Чулхуларан Чӗмпӗре куҫса килнӗ Илья Николаевич Ульянов инспекторпа паллашни, унӑн ырӑ канашӗсем те нумай пулӑшнӑ.

1870 - 1875 ҫулсенче И. Я. Яковлев Хусан университетӗнче вӗреннӗ. Кунта та вӑл ҫырулӑх тӑвас ӗмӗте пӑрахман. 1870 ҫулхи пӗр кӗрхи кун вӑл Хусан университетӗнче арабпа тутар чӗлхисем вӗрентекен Н. И. Ильминский профессорпа паллашать, ҫӗнӗ ҫырулӑх тӑвасси ҫинчен сӑмах пуҫарать. Н. И. Ильминский, И. Я. Яковлев студентӑн шухӑшне ырласа, ӑна ҫак ӗҫре пулӑшма килӗшет. Чӑваш ҫырулӑхӗн малтанхи тапхӑрӗнчи ӗҫсене тӗплӗн тишкерсе тухсан, Н. И. Ильминскипе И. Я. Яковлев акӑ мӗн асӑрханӑ: малтанхи тӑлмачсем, ҫавӑн пекех Хусан вӗренӳ окргӗнчи чӑваш шкулӗсен инспекторӗ Н. И. Золотницкий те чӑваш чӗлхин тӗп законӗсене ҫителӗклӗ таран пӗлменнине тата вӗсем пӗтӗм чӑваш чӗлхине тивӗҫтерекен пӗр литература чӗлхи тумалли идейисемпе принципӗсем йӑнӑш пулнине курнӑ. Н. И. Ильминский И. Я. Яковлева чи малтанах чӑвашсен калаҫу чӗлхинчи сасӑсен йӗркине тӗрӗс палӑртакан алфавит тумалли ҫинчен каланӑ. Вӑл ҫак ӗҫе И. Я. Яковлевсӑр пуҫне университетӑн историпе филологи факультечӗн арабпа тутар чӗлхисен уйрӑмӗн иккӗмӗш курсӗнче вӗренекен В. А. Белилин студентпа Хусанти тӗне кӗнӗ тутар ачтасен шкулӗнче вӗренекен чӑваш ачине С. Н. Тимрясова хутшӑнтарнӑ. Ҫапла вара, Н. И. Ильминский кӑтартӑвӗсене тӗпе хурса, И. Я. Яковлевпа ӑна пулӑшакансем ҫӗнӗ ҫырулӑхӑн никӗсне хывма ӗҫе кӳлӗннӗ. Чӑваш алфавитне тума ҫӑмӑлах пулман. Чи малтанах чӑваш чӗлхинчи сасӑсен (хисепне, сӑн-сӑпатне, вӗсем пуплевре хӑҫан епле илтӗннине уҫӑмлӑн палӑртмалла пулнӑ. Вырӑс пулнӑ май В. А. Белилин чӑваш чӗлхинчи сасӑсене ҫӑмӑллӑнах уйӑрса илме пултарнӑ. И. Я. Яковлев аса илнӗ тӑрӑх, В. А. Белилин чӗлхе ӑслӑлӑхне аван чухлакан, пултаруллӑ та ӗҫчен студент пулнӑ.

1871 - 1873 çулсенчи çуллахи каникул вăхăтěнче И. Я. Яковлев хăйěн юлташěсене Пăва уесěнчи Кăнна Кушкипе ытти ялсенчи чăвашсен калаçу чěлхине сăнаса вěренме виçě хутчен экспедицие илсе кайнă. Çынсене пухса, вěсен калаçăвне тимленě, малтанхи букварьсем валли халăх сăмахлăхěн тěслěхěсене çыра-çыра илнě, вěсен конструкцине, унта шухăш мěнле йěркеленнине, сăмахсен пуплеври вырăнне, сасăсен тытăмне сăнанă, тěпченě. Чăваш чěлхинчи сасăсен хисепěпе пахалăхне тěрěс палăртас тесе, малтанхи вăхăтра уйрăмах В. А. Белилин тăрăшса ěçленě. Сăнавсем тăва-тăва, И. Я. Яковлевпа ăна çырулăх тăвас ěçре пулăшакансем В. А. Белилин, С. Н. Тимрясов, А. В. Рекеев, И. И. Иванов, Т. П. Петров чăваш чěлхинче хытă тата çемçе хупă сасăсемпе кěске уçă сасăсем *ă, ě* пуррине асăрханă. Çапла тăрăшса ěçленě май вěсем чăваш чěлхинче 8 уçă сасă - *а, ъ* (хальхи *ă* вырăнне), *е, ь* (хальхи *ě* вырăнне), *ы, и, ў, ӱ* — тата 37 хытă тата çемçе хупă сасă — пěтěмпе 45 сасă палăртнă. Çакăнпа И. Я. Яковлевпа ун вěренекенěсем чăваш чěлхин çěнě алфавитне пултарас тесе тунă тěпчевěн малтанхн тапхăрě вěçленнě. Вěсем кашни сассăн хытă тата çемçе варианчě сăмах пěлтерěшне уйăрса илме пулăшакан уйрăм фонема тесе шутланă. Ку шухăша пěтěмпех тěрěс тесе йышăнма çук.

Каярахпа И. Я. Яковлев хăй те çак алфавитăн хăш-пěр çитменлěхěсене тата чăваш чěлхинчи сасăсен тытăмне вěçне çитиех тěпчесе çитерейменнине асăрханă. Апла пулин те 1871 çулхи ноябрь уйăхě тěлнелле, хăйсем тунă алфавитпа усă курса, И. Я. Яковлевпа ун юлташěсем «Чăваш ачисене çырăва вěренмелли кěнекен» алçырăвне хатěрлесе çитернě, ноябрěн 15-мěшěнче (çěнě стильпе ноябрěн 27-мěшěнче) ăна пичете яма çирěплетнě. 1872 çул пуçламăшěнче ăна Хусанта пичетлесе кăларнă. Çакăнтан пуçланнă та ěнтě И. Я. Яковлев пуçарнă çěнě çырулăх кунçулě. 1872 çулта И. Я. Яковлев чăваш алфавичěн 27 саспаллирен тăракан иккěмěш вариантне туса хатěрленě, унта вырăс чěлхинчи янăракан хытă хупă сасăсем пулман. Çав çулах алфавитăн çěнě варианчěпе усă курса, И. Я. Яковлев «Çырăва вěренме тытăнмалли кěнеке» пичетлесе кăларнă.

1873 çул пуçламăшěнче вăл чăваш алфавичěн 25 саспаллирен тăракан (вырăс чěлхинчи 17 с аспалли çумне чăваш чěлхинчи сасăсен хăйевěрлěхне палăртакан 8 саспалли хушнă) виççěмěш ва риантне туса хатěрленě, çак алфавитпа усă курса, çěнěрен букварь пичетлесе кăларнă. Кěнекен пě р экземплярне вăл Чěмпěр кěпěрнинчи халăх училищисен инспекторне И. Н. Ульянова ярса панă. « Эпě ěнер Сирěн кěнекен экземплярне те илтěм. Ăна пичетлесе пěтернěшěн эпě сирěнпе пěрле сав ăнатăп, хам енчен эпě ăна май пур таран чăваш шкулěсенче сарма пулăшăп», — тесе çырнă. 1873 çулхи апрелěн 5-мěшěнче Н. И. Ульянов И. Я. Яковлев студент патне янă çырăвěнче.[6] Çак вăхăтра н пуçласа И. Я. Якавлевăн çěнě алфавичě чăваш наци çырулăхěнче татăклăнах çирěпленет. Хăшп ěр пěчěк улшăнусене шута илмесен, унпа тăван çырулăхра паян кунччενех усă куратпăр.

Çапла ěнтě, çěнě чăваш çырулăхне тунă чухне И. Я. Яковлев пěччен пулман, ăна çак ěçре ертсе тата хастар пулăшса пыракансем пулнă. Сăмахран, вăл Н. И. Ильминский çинчен ак мěн çырать:

«Чести личной самостоятельной инициативы в деле чувашских переводов я себе приписать не могу. И тут толчок дал мне Н. И. Ильминский, раскрывший мне отношения между чувашским, ру сским и европейскими языками, научивший меня улавливать, усваивать себе особенности, дух ино

родческих и иных языков, их фонетику... Помню еще следующие советы, мнения Николая Ивановича: «Не будьте самоуверенны! Учитесь и учитесь! Не стыдитесь учиться у какого-либо старика-рассказчика из народа! Вслушивайтесь! Улавливайте тон, оттенкн, выговоры, произношения! Надо развивать свой слух. Переводчик должен прежде всего сам понимать то, что он переводит...» Так учил меня Н. И. Ильминский. Под влияннем его наставлений и указаний я, в первый же год пребывания моего в Казанском университете, делал опыты переводов с татарского языка на чувашский при помощи Алексея Рекеева и Игнатия Иванова, хорошо знавших татарский язык. Опыты удавались. Затем уже я приступил к опытам переводов с русского на чувашский язык по программе Ильминского...».[7] Кунсăр пуçне, И. Я. Яковлев хăйне çырулăх йĕркелесе яма пулăшнă В. А. Белилин, С. Н. Тимрясов, А. В. Рекеев, И. И. Иванов, Т. П. Петров çинчен те чылай çĕрте ырăпа асăнать. Камсем пулнă-ха вĕсем — чăваш халăхĕн культурине çĕклессишĕн пĕтĕм чун-хавалĕпе тăрăшса ĕçленĕ çак çынсем?

Василий Алексеевич Белилин 1852 çулта Хусанта мещен çемйинче çуралнă. 1869 çулта Хусан университечĕн историпе филологи факультечĕн арабпа тутар чĕлхисен уйрăмне вĕренме кĕнĕ. 1874 çулта университетран вĕренсе тухнă. Унтан пĕр вĕçĕмсĕр 33 çул хушши (1874 — 1907) Хусанти гимназисенче чĕлхепе лнтература вĕрентнĕ, 11 çул хушши (1907 — 1918) Хусанти 2-мĕш реальнăй училище директорĕнче ĕçленĕ. 1918 çулта ăна Хусанти Советски районĕнчи икĕ сыпăклă шкула ĕçлеме куçарнă. Шкулта ĕçленĕ хушăрах вăл 1920 — 1921 çулсенче рабпрос аппаратĕнче ĕçленĕ. 1923 çулхи февралĕн 1-мĕшĕнче, 71 çула çитсен, пенсие тухнă. В. А. Белилин 1932 çулта, 80 çул тултарсан, Хусанта вилнĕ.

Выçлăх çул, 1922 çулхи октябрĕн 7-мĕшĕнче, Чăваш облаç ĕçтăвкомĕн ларăвĕнче В. А. Белилина апат-çимĕç тĕлĕшпе пулăшасси çинчен ыйту сӳтсе явнă, ăна 20 пăт çăнăх парса пулăшнă.[8]

Çĕнĕ чăваш çырулăхне тума хастар хутшăннăшăн тата çуралнăранпа 80 çул тултарнă ятпа 1932 çулхи октябрĕн 8-мĕшĕнче Совет правительстви (ВЦИК) В. А. Белилина «Ĕç геройĕн» хисеплĕ ятне панă.[9]

Сергей Николаевич Тимрясов[10] 1851 çулта хальхи Тутар республикинчи Чистай районне кĕрекен Ишел ялĕнче тĕне кĕмен чăваш хресченĕн çемйинче çуралнă. Малтанах вăл Ишел ялĕнчи тĕне кĕнĕ тутарсен шкулĕнче вĕреннĕ. Унтан ăна Н. Ильминский ыйтнипе Хусанти тĕне кĕнĕ тутарсен шкулне вĕренме илнĕ. Кунта вăл 1872 çулхи январьччен пурăнать. И. Я. Яковлева çĕнĕ çырулăх тума хастар пулăшать. Тутарсем хушшине çуралса ӳснĕрен вăл ачаранпах тутарла та аван пĕлнĕ, çакă вара ăна тутарла çырнă тĕн кĕнекисене чăвашла куçарса кăларма май паратъ. 1871 çул пуçламăшĕнче С. Н. Тимрясов И. Я. Яковлевпа тата В. А. Белилинпа пĕрле чăваш чĕлхинчи сасăсене вырăсла тутар чĕлхисенчи сасăсемпе танлаштарса тĕпчеме тытăннă. Тĕпчев ĕçĕ çăмăлах пулман. Çак ĕçе вĕсем диктантсенчен пуçланă. С. Н. Тимрясов тутарларан чăвашла куçарса вуланă текстсене В. А. Белилин вырăс алфавитĕнчи саспаллисемпе чăвашла çырса пынă. Н. И. Ильминский аса илнĕ тăрăх, вĕсем темиçе эрне хушшинчех тутарла çырнă тĕн кĕнекисене пĕтĕмпех чăвашла куçарнă, чăваш чĕлхинчи сасăсене тĕрĕс палăртма тĕрлĕ сăнавсем тунă. 1872 çулхи январьтен пуçласа май уйăхĕччен С. Н. Тимрясов Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче учительте ĕçлет. 1872 çулхи июлĕн 2-мĕшĕнч

е Н. И. Ильминский хута кӗнипе С. Н. Тимрясов пуҫламӑш шкул учителӗн ятне илме экзамен тытнӑ. Халӑх учителӗн ятне илнӗ С. Н. Тимрясова хӑй ҫуралса ӳснӗ Чистай уесӗнчи Ишел ялне тӗне кӗнӗ тутарпа чӑваш ачисене вӗрентме янӑ.

1874 - 1877 ҫулсенче С. Н. Тимрясов Хусанти Н. И. Ильминскин ертсе пынӑ учнтельсен семинарийӗнче вӗреннӗ. Ҫакӑн хыҫҫӑн И. Я. Яковлев ыйтнипе ӑна Чӗмпӗрти чӑваш шкулне ӗҫлеме янӑ. Кунта вӑл виҫӗ ҫул хушши (1877 - 1880) ӗҫленӗ, И. Я. Яковлева тӗн кӗнекисем куҫарма пулӑшнӑ. 1880 - 1883 ҫулсенче С. Н. Тимрясов — Чистай уесӗнчи Сунчелейри чӑваш шкулӗн учителӗ, кунтах вӑл Н. М. Охотниковпа ҫывӑх паллашнӑ. 1885 - 1886 ҫулсенче ҫав уесрах Кивӗ Мокшина ялӗнче чӑваш ачисене хутла вӗрентнӗ. С. Н. Тимрясов хӑйӗн юлашки ҫулӗсене Чистай уесӗнчи Чӑваш Шупашкарӗ ялӗнчи шкулта ӗҫлесе ирттернӗ. 1910 ҫулхи июлӗн 23-мӗшӗнче, 58 ҫул тултарсаи, С. Н. Тимрясов ҫӗре кӗнӗ.

С. Н. Тимрясов пултаруллӑ учитель пулнӑ. Ун пирки архив материалӗсемпе тӗрлӗ шкул отчечӗсенче чылайӑшӗ ӑшӑ сӑмах каласа ҫырнӑ. Акӑ «Годичное собрание братства святителя Гурия» журналӑн 1874-мӗш ҫулхи кӑларӑмӗнче ҫакӑн пек йӗркесем пур: «Тимрясов обладает природным мягким характером, с любовью и ревностно исполняет свою учительскую обязанность и таким образом вполне оправдывает доверие к нему братства и заслуживает любовь, как от своих питомцев, так и от лиц, наблюдающих за самим Тимрясовым». С. Н. Тимрясов пултаруллӑ учитель пулни ҫинчен И. Я. Яковлев Хусан кӗпӗрнинчи Чистай уесӗнчи халӑх училищисен инспекторӗ патне ҫапла ҫырнӑ: «При этом считаю долгом присовокупить, что Тимрясов состоял учителем в Симбирской чувашской школе с 1 августа 1877 г. по 1880 год и во все время был усерден к исполнению своей обязанности, отличного поведения».[11]

С. Н. Тимрясов хӑй вӑхӑтӗнче чӑваш халӑх этнографийӗпе те интересленнӗ. 1875 ҫулта «Известия по Казанской епархии» журналӑн 9-мӗш номерӗнче унӑн «Похороны и поминки чуваш-язычников в дер. Ишалькиной Чистопольского уезда» ятлӑ статйи пичетленсе тухнӑ. С. Н. Тимрясов мӗн виличченех хӑйӗн аслӑ вӗрентекенӗпе И. Я. Яковлевпа ҫыхӑну тытса тӑнӑ.

Алексей Васильевич Рекеев — И. Я. Яковлевӑн пӗрремӗш вӗренекенӗ, чи ҫывӑх пулӑшаканӗсенчен пӗри. Вӑл та 1848 ҫулта Кӑнна Кушкинчех удельни хресчен ҫемйинче ҫуралнӑ. 1869 - 1872 ҫулсенче И. Я. Яковлев пулӑшнипе Чӗмпӗрти хула училищинче вӗреннӗ. 1872 ҫулта И. Я. Яковлев Хусан университетӗнче вӗреннӗ ҫулсенче вӑл Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗнче ачасене вӗрентнӗ, И. Н. Ульяновпа туслӑ пулнӑ. Ҫӗнӗ чӑваш ҫырулӑхне тунӑ тапхӑрта А. В. Рекеев Тимӗрҫенти (халӗ Ульяновск облаҫӗнчи Чӑнлӑ районне кӗрет) чӑваш шкулӗнче вӗрентнӗ, малтанхи букварьсен пахалӑхне сӑнаса тӗрӗсленӗ. 1874 - 1881 ҫулсенче вӑл Хусанти Н. И. Ильминский ертсе пынӑ учительсен семинарийӗнче чӑваш ачисене вӗрентсе пурӑннӑ. 1881 ҫулта А. В. Рекеев Тетӗш уесӗнчи Кивӗ Эйпеҫ (халӗ Чӑваш республикинчи Елчӗк районӗ) ялӗнчи шкулта вӗрентме тытӑнать. Кунта вӑл пӗр улшӑнмасӑр 30 ҫул хушши, пенсие тухиччен, ӗҫлет. А. В. Рекеев — И. Я. Яковлевӑн паллӑ сотрудникӗ. Вӑл мӗн виличченех И. Я. Яковлевпа пӗрле чӑваш халӑх культурине ӳстерессишӗн ӗҫлесе пурӑннӑ. Вӗсем хушшинчи туслӑ та ӗҫлӗ ҫыхӑнусен пӗлтерӗшӗ чӑваш ҫырулӑхӗн историйӗнче питех те пысӑк.

Игнатий Иванович Иванов[12] 1848 çулта хальхи Тутар республикинчи Кăнна Кушки ялĕнче удельни хресчен çемйинче çуралнă. 1856 çулта вăл И. Я. Яковлевпа пĕрле Пăрăнтăкри удельни шкулне вĕренме кĕнĕ, унтан Чĕмпĕрти çĕр виçекенсен шкулĕнче вĕреннĕ, анчах ашшĕ ўкĕтленипе унăн вĕренме пăрахса яла таврăнма тивнĕ. Вара 1870 çулччченех кунта хресчен ĕçĕпе пурăннă. 1870 çулта И. Я. Яковлев чĕнсе илнипе И. И. Иванов Хусана Н. И. Ильминский уçнă тĕне кĕнĕ тутар ачисен шкулĕн ĕçĕ-хĕлĕпе паллашать, учитель пулма хатĕрленет. 1871 - 1875 çулсенче тăван ялĕнчи шкулта ĕçлесе пурăнать. 1876 çулта Хусанти учительсем хатĕрлекен семинарире учитель ятне илме экзамен тытнă хыççăн Тетĕш уесĕнчи тĕрлĕ шкулсенче учительте ĕçлет.

Тăван ялта ĕçленĕ вăхăтра И. И. Иванов халăх пурнăçĕнчен илнĕ темăсем тăрăх йăла калавĕсем çырма тытăннă. Унăн калавĕсенчен паллăраххисем: «Çынна мулшăн туман, мула çыншăн тунă», «Çынна епле тăвăн, ху та çавна курăн», «Çынна усал тăвакан хăй те усал курать» т. ыт. те. И. И. Иванов пурĕ 14 калав çырнă. Вĕсенче вăл халăх пурнăçĕнчи, йăли-йĕркинчи çитменлĕхсене питлет. Унăн икĕ калавĕ 1900 çулта хăй вилнĕ хыççăн Чĕмпĕрте тухнă «Чăваш букварĕнче» пичетленнĕ, ыттисем ку таранччченех алçыру халлĕн упраннă. И. И. Иванов 1885 çулта тăван ялĕнчех вилнĕ.

Пăва уесĕнчи Пимĕрсел ялĕнчи Т. П. Петров учитель те çĕнĕ çырулăх тăвакансене хастар пулăшнă: укçа-тенкĕ ярса тăнă, халăх сăмахлăхĕн тĕслĕхĕсене пухнă, тимлĕ информатор пулнă. 1873 çулхи октябрьте Н. И. Ильминскипе И. Я. Яковлев пулăшнипе вăл халăх училищисен учителĕн ятне илме экзамен ăнăçлă тытнă. И. Я. Яковлев 1873 çулхи октябрĕн 18-мĕшĕнче А. В. Рекеев патне янă çырăвĕнче Т. П. Петров çинчен çапла çырнă: «Ĕнтĕ пирĕн инçетри чăвашсемшĕн тăрăшакан тата пĕр çын пулчĕ. Тимофей Петрович чăвашла вĕрентме пит ăстах пулмасан та, - вăл хамăр çын, кирлĕ пулсан ун патне пулăшма чăвашла авантарах пĕлекен ача яма та юрать».

Т. П. Петров учителĕн ĕмĕрĕ вăрăм пулман, вăл 1875 çулхи октябрĕн 9-мĕшĕнче хальхи Куйбышев облаçĕнчи Чаллăпуç районне кĕрекен Тилечер ялĕнче çĕре кĕнĕ.

Юлашкинчен çапла çирĕплетсе калăпăр: çĕнĕ чăваш çырулăхĕн сăпки умĕнче чĕлхе наукине ăста пĕлекен хастар çынсен ушкăнĕ тăнă. Çĕнĕ чăваш çырулăхне тăвас шухăш чи малтан Н. И. Ильминский пуçĕнче çуралнă. Çав идейăна пурнăçлама ăна И. Я. Яковлев пек çивĕч ăслă, пултаруллă организатор кирлĕ пулнă. Ку вара пĕтĕм ĕçе йĕркелесе ертсе пынă. Уншăн вăл хăйĕн вĕренӳ вăхăтне те, укçи-тенкине те хĕрхенмен. И. Я. Яковлева çак пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕçре унăн çывăх юлташĕсем В. А. Белилин, С. Н. Тимрясов тата малтанхи вĕренекенсемпе тусĕсем А. В. Рекеев, И. И. Иванов тата Т. П. Петров хастар пулăшса тăнă. Çавăншăн чăваш халăхĕ вĕсене яланах асра тытĕ.

*Алексеев, А. А. И. Я. Яковлев тата ăна çырулăх тума пулăшакансем / А. А. Алексеев // 100 лет новой чувашской письменности. – Чебоксары, 1972. - С. 98–108.*

[1] О. С. Ахманова. Словарь лингвистических терминов. М., 1969, стр. 323.

[2] К. М. Мусаев. Алфавиты языков народов СССР. М., 1965. стр. 9.

[3] В. Ф. Каховский. Была ли письменность у чувашей в древности? «Ученые записки» ЧНИИ, вып. XXI, 1962, стр. 201 — 212; А. А. Трофимов, Тĕрĕри çырулăх. «Коммунизм ялавĕ», 1971, окт. 21-мĕшĕ.

[4] Журнал Министерства Народного Просвещення, 1870, февраль, стр. 1 – 2.

[5] ЧНТИ НА, II уйрăм, 836 хр. ед., инв. № 2666, 55 — 58 лл.

[6] «Записки Отдела рукописей Государственной ордена Ленина библиотеки им. В. И. Ленина», вып. 18, 1956, стр. 345.

[7] ЧНТИ НА. II уйрăм, 836 хр. ед., инв. 2666 №, 98 — 103 лл.

[8] ЧАССР Государство Тĕп архивĕ, 125 ф., 3 оп., 5 хр. ед., 313 л.

[9] ОР Государетво тĕп архивĕ, 1235 ф., 136 оп., 334 хр. ед., 6 л.

[10] ТАССР Государство Тĕп архивĕ, 93 ф., 1 оп., 64 хр. ед., 85 л.; 93 ф., 1 оп., 90 хр. ед., 126 л.; 93 ф., 1 оп., 88 хр. ед., 124 л.; 93 ф., 1 оп,. 48 хр. ед., 7 л.; ТАССР Государство тĕп архивĕ, 968 ф., 1 оп., хр. ед. 156, 36 — 38 л.

[11] ЧАССР Государство Тĕп архивĕ, 207 ф., 1 оп., 6 хр. ед. 45 л.

[12] М. Я. Сироткин. Очерки дореволюционной чувашской литературы. Чебоксары, 1968, 61 - 65 стр.